38-31

# ЙĂВА



ЧĂВАШИЗДАТ ★ 1938 ★ ШУПАШКАР.

*ШКУЛ ÇУЛНЕ ÇИТМЕН АЧАСЕМ ВАЛЛИ*

# КОЛОБОК

*Н. У Р Х И кусарнӑ*

*К. РУДАКОВ ӳкерчĕкĕсем*



Пĕр старикпе карчăкĕ пурăнаççĕ тет. Старикĕ карчăкĕнчен:

— Карчăк, йăва пит çиес килет. Йăва пĕçерсе пар-ха!—тесе ыйтать тет.

— Мĕнрен пĕçерес-ха? Çăнăх çук-çке!—тет.

— И-и, карчăк, ырçа тĕпне хырса пăх, пура тĕпне шăлса пăх, пĕр йăва тумалăх пуçтарăнех,—тет.



Карчӑк чӑх ҫунатти илчӗ те ырҫа тӗпне хырчӗ, пура тӗпне шӑлчӗ, пӗр-ик йӗкӗр ывӑҫ ҫӑнӑх тупӑнчӗ. Карчӑк йӑва пӗҫерчӗ те чӳрече ҫине сивӗтме хучӗ.



Йӑва выртрӗ-выртрӗ те сасартӑк кусрӗ кайрӗ — чӳрече ҫинчен сак ҫине, сак ҫинчен урайне, урай тӑрӑх алӑк патне, алӑк пуканӗ урлӑ ҫенӗке йӑлт! сиксе каҫрӗ те ҫенӗкрен крыльцана, крыльцаран килхушшине, килхушшинчен хапха витӗр урама, унтан ҫулпа кусса кайрӗ.



Йăва çулпа кусса пырать, ăна хирĕç мулкач пырать.

— Ну, йăва, еп сана çийеп!—тет. — Ан çи мана, катăк тута, еп сана йурă йурласа кăтартăп, — терĕ те йурласа йачĕ:

„Епĕ йăва, ху пĕлен, пуринчен те лайăххи: мана ырçа тĕпĕнчен, мана пура тĕпĕнчен хырса-шăлса пуçтарнă, сĕтпе çупа пĕçернĕ, чӳрече çинче сивĕтнĕ. Епĕ тартăм старикрен, епĕ тартăм карчăкран, санран — катăк тутаран — тарăп епĕ çăмăлах!“

Йурласа пĕтерчĕ те малала кусса кайрĕ, мулкач курса анчах йулчĕ.



Кусса пыраť йăва, ăна хирĕç кашкăр пыраť.

— Йăва, йăва, еп сана çийеп! — тет. — Ан çи мана, кăвак кашкăр, еп сана йурă йурласа кăтартăп,—терĕ. Çапла каласанах йурласа йачĕ:

„Епĕ йăва, ху пĕлен, пуринчен те лайăххи: мана ырçа тĕпĕнчен, мана пура тĕпĕнчен хырса-шăлса пуçтарнă, сĕтпе-çупа пĕçернĕ, чӳрече çинче сивĕтнĕ. Епĕ тартăм старикрен, епĕ тартăм карчăкран, епĕ тартăм мулкачран, санран— кăвак кашкăртан—тарăп епĕ çăмăлах!“

Йурласа пĕтерсенех кăлтăр! кусса кайрĕ те кашкăр пăха йулчĕ.



Кусса пырать йăва, ăна хирĕç упа пырать. — Йăва, йăва, еп сана çийеп!—тет.

— Мана ăçтан çийессу пур сан, урлă уран!—терĕ. Хăй каллех йурласа йачĕ:

„Епĕ йăва, ху пĕлен, пуринчен те лайăххи: мана ырçа тĕпĕнчен, мана пура тĕпĕнчен, хырса-шăлса пуçтарнă, сĕтпе-çупа пĕçернĕ, чўрече çинче сивĕтнĕ. Епĕ тартăм старикрен, епĕ тартăм карчăкран, епĕ тартăм мулкачран, епĕ тартăм кашкăртан, санран—урлă урараи—тарăп епĕ çăмăлах!"

Каллех йăва тарчĕ, упа курса анчах йулчĕ.



Кусса пырат̆ йава, ӑна хирӗҫ тилӗ пырат̆.

— Лайӑх-и, йава тус. Ах, есӗ хитре-ҫке! — тет. Иави йурласа йачӗ:

„Епӗ йава, ху пӗлен, пуринчен те лайӑххи: мана ырҫа тӗпӗнчен, мана пура тӗпӗнчен хырса-шӑлса пуҫтарнӑ, сӗтпе-ҫупа пӗҫернӗ, чӳрече ҫинче сивӗтнӗ. Епӗ тартӑм старикрен, епӗ тартӑм карчӑкран, епӗ тартӑм мулкачран, епӗ тартӑм кашкӑртан, епӗ тартӑм упаран, тарӑп епӗ санран та!“



— Пит аван йурă! — терĕ тилĕ. — Анчах епĕ ваталса кайрăм-çке, хăлха витĕр илтмест: ман сăмса çине ларса тепре йурласа пар-ха, хытăрах йурла, — тет.

Йава тилĕ сăмси çине сиксе ларчĕ те çав йурра тепре йурласа пачĕ.

— Спаççипă йăва, пит аван йурă. Ман чĕлхем çине ларса йулашки хут йурласа пар-ха, — терĕ те, тилĕ хăйĕн чĕлхине кăларса хучĕ.

Йăва, айванскер, ун чĕлхи çине йăкăлт сиксе ларчĕ, тилли ам! терĕ те йăвана çирĕ йачĕ.

Хакĕ 1 тен. 50 пус
цена 1 руб. 50 коп.



Редактор М. Иеник. Техн. редактор Ф. Яковлев. Художник К. Рудаков.

Сдано в производство 17/II-1937 г. Подписано к печати 19/XI-1937 г. Уполн. Чувашглавлита № 2038. Заказ № 548.
Чувашгиз № 19 Формат бумаги 62 × 94 1/16. Об'ем 1 печ. лист. Тираж 5000 экз.

Отпечатано в типорафии № 1 Чувашполиграфтреста г. Чебоксары, Дом печати